# К.В.ИВАНОВĂН ПИЧЕТЛЕНМЕН ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ

«Нарспи» авторĕн «Чăваш юмахĕсемпе халапĕсем» ятлă кĕнекере пичетленнĕ произведенийĕсемпе М.Лермонтов поэтăнне вырăсларан куçарнă сăввисемсĕр пуçне тата пичетленменнисем, çырма тытăннă произведенисем те пур. Усраннă ал çырăвĕсем тăрăх вĕсене автор çырса пĕтерни-пĕтерменни паллă мар. К.В.Ивановăн пĕтĕм творчествине тĕпчесе хак пама пулăшас майпа унăн ал çырăвĕсене пичетлесе кăларăпăр.

Ку ал çырăвĕсенчи материалсемпе паллашнă чухне К.В.Ивановăн, «Нарспи» поэминчи пекех, лайăх, паха енĕсемпе пĕрлех юрăхсăр шухăшсем те пуррине асра тытас пулать.

К.В.Иванов «Нарспи» поэмăна епле çырнине татăклăн каласа пама пултараймастпăр, унăн малтанхи варианчĕсемпе черновикĕсем халĕ те пирĕн алăра çук-ха. Халĕ пичетленекен хăш-пĕр сыпăкĕсем тăрăх, К.В.Иванов планпа ĕçленинине, произведенийĕсене тӳрлетсе, улăштарса çырнине кăтартма пулать.

Константин Васильевич хăй виличченех, вилĕм вырăнĕ çинче те темелле чăваш литературишĕн çуннă, вăл тем пек пысăк произведенисем çырас тесе тĕрлĕ материалсем пуçтарнă, чăваш йăлисене тĕплĕн тишкернĕ. Вăл 1910 çулхи хĕлле Кайраклă ялĕнче нумай материал пухнă. Çапах та вăл çырайман, хăйĕн аслă шухăшĕсене, пулас хăватлă произведенийĕсене хăйĕн пуçĕнче усранă, вăл вĕсене хăйĕнпе пĕрлех нӳрлĕ çĕр ăшне пытарнă. Вăл çырайманнин айăпĕ Иванов таланчĕ пулманни е часах сӳнсе ларни çинчен каламасть. Вăл айăп пĕтĕмпех тискер патша самани çине тата миссионерсем çине ӳкет.

К.В.Ивановăн чăн-чăн талантне ун чухне хаклакан пулман, вăл поэзи тĕлĕшпе нумайтарах, хытăрах ĕçлетĕр тесе ăна никам та хавхалатман. Чăваш миссионерĕсем ăна хăйсен ĕçне тутарттарасшăн пулнă, чиркӳ кĕнекисем куçарма лартнă. «Нарспи», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» произведенисене автор 1907—1908 çулсенче çырнă. Ун чухне вăл 17—18 çулхи ача кăна пулнă. 17 çулхи ача çавăн пек паха «Нарспи» поэмăна çырма пултарнă пулсассăн — çитĕнсе çитнĕ Иванов тата вăйлăрах япаласем çырма пултарасси пире пĕрре те иккĕлентермест.

Анчах та хăватлă таланта миссионерсем çисе янă, унăн

чунне шӗкӗсем пек кăшланă, ăна «Евангели» кӗнекине, Библин хăш-пӗр пайӗсене те куçарттарнă.

Чăваш миссионерӗсем пысăк поэта çапла кăкарса лартнă, вӗсемех ăна çамрăклах çӗре кӗртнӗ.

## I. «ШУЙТТАН ЧУРИ» ТРАГЕДИ

К.В.Иванов 1907—1908 çулхи хӗлле «Пăртта йăхӗн историйӗ» ятлă произведени çырасшăн пулнă. Вăл А.С.Пушкинăн «Араб Петра Великого» евӗр автобиографиллӗ произведени пулмалла пулнă. К.В. çав вăхăтрах çырма пуçланă пысăк произведени — «Шуйттан чури» ятлă трагеди татăкӗсем пур*. «Шуйттан чури» трагедин тӗп шухăшне — укçа çынна аташтарнине — илсен ӗлӗкхи грек драматургӗсен (Софокл, Эсхил) тата Шекспир сывлăшӗ К.В.Иванова перӗнни сисӗнет. Трагеди тӗп геройӗ — укçа. Пӗртăван этемсем — пиччӗшӗпе шăлнӗ. Шăлнӗ вăрçăра аманать, унăн укçа енчӗкӗ хăйӗн çумӗнче пулнă. Шуйттан хӗтӗртнипе пиччӗшӗ шăлнӗне сăнăпа чиксе вӗлерет те вăрçăран пăрахса тарать, унăн тӗп шухăшӗ çапла:

Текех канăçсăр çынсем
Вăрçăсенче çӳреччӗр.
Мана тата мӗн çитмен?
Манăн акă пурте пур.

Ылтăн-кӗмӗл манăн вăл,
Ялти пуян эпӗ вăл.
Укçа пулсан мул та пур.
Унтан урăх мӗн кирлӗ?

---

* Хăш-пӗр юлташсем (Я.Захаров, Г.Комиссаров, М.Сироткин) ку произведени пирки йăнăшаççӗ пулас, вӗсем пурте «Шуйттан çури» ятлă комедие 1910—1911 çулхи хӗлле çырма пуçланă теççӗ. Ку шухăш тӗрӗс мар, ячӗ те «Шуйттан çури» ятлă мар, «Шуйттан чури», тепӗр енчен, вăл комеди мар, трагеди пулмалла пулнă. К.В.Ивановăн тăван шăллӗсемпе йăмăкӗ (Квинтилиан, Петӗр тата Праски) каланă тăрăх, «Шуйттан чури» ятлă трагедие çырса пӗтернӗ пулать. Вăл произведенисӗр пуçне К.В.Ивановăн пичетленмен произведенисем нумай пулнă. Чӗмпӗр шкулӗ 40 çул тулнине асăнса юбилей тунă тӗле вăл пысăк сăвă çырнă иккен. Анчах вăл произведенисем 1919 çулта граждан вăрçи вăхăтӗнче пӗр çар чаçӗ аллине лекнӗ. Çав произведенисем пӗр пысăк папкăра пулнă. Малашне Ивановăн произведенийӗсене пухнă чух Ӗпхӳ, Пелепей тата Пушкăрт республикинчи архивсене пăхас пулать.

Пирӗн умра тата тепӗр задача тăрать — Иванов çырăвӗсене пухасси. Унпа çыхăну тытса пурăннă çынсем тата унăн юлташӗсем пире пулăшӗç тесе шанатпăр, вӗсем хăйсен аллинчи материалӗсене литература организацийӗ аллине парӗç (*У.Я.*).

Çынсем укçашăн çунни пире «Нарспи» поэма тăрăх та паллă. Михетер Нарспие укçашăн сутать. Ивановăн ку произведенийĕ тăрăх, этем хăйĕн чунне укçашăн шуйттана сутать. Çав вăхăтрах этеме хирĕç пирĕшти тухать, унăнне ыйтать. Этем ăнсăр пулать. Шуйттанпа пирĕшти тĕл пулаççĕ.

План тăрăх трагеди çапла пулмалла: этем вăйсăрланса пырать. Вилет те, унăн чунне шуйттан илсе каять.

Трагеди питĕ пысăк шухăшпа, грексен авалхи трагедийĕ пек сценăсемлĕ пулмалла пулни курăнсах тăрать. Малтанхи пайĕнче шуйттанпа пирĕшти тĕл пулни темле пулĕччĕ, ал çырăвĕнче вăл паллă мар. План тăрăх, диалоглă трагеди пулмалла пек, анчах Иванов кайран хăйĕн шухăшне улăштарнă пулĕ, пьеса формине пăрахăça кăларса трагедиллĕ поэма çырма тытăннă пек туйăнать.

«Шуйттан чури» трагедие поэма туса çырни М.Ю.Лермонтовăн «Демон» поэмине те асăнтарать, унта та Демонпа пирĕшти тĕл пулса этем чунĕшĕн тавлашаççĕ, пирĕшти Демона çĕнтерейместь. Çапла вара, «Демон» ятлă поэма шăрши те çапнă теме пулать.

К.В.Иванов хăйĕн планĕнче «Халăх калавне улăштарнă» тесе çырать, анчах чăваш мифологийĕнче, халапĕсемпе юмахĕсенче кун пек сарлака темăллă япаласем пуррине татсах калама çук пек. Г.Т.Тимофеевăн «Тăхăрьял»* кĕнекинче укçана ылханакан халăх сăввисем пур, анчах унта кун пек анлă сюжетлă темăсем çук. Çавăнпа К.В.Иванов вăл сюжета халăх калавĕнчен илнĕ тени тĕрĕсех те пулмасть, е илнĕ пулсассăн та нумай урăхлатнă, тарăнлатнă. «Шуйттан чури» сюжечĕ поэт пуçĕнче çуралнă фантази тени тĕрĕсрех пулать пулĕ.

К.В.Иванов çырнă план çапла пулнă:

Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ.

## Трагедия в трех действиях

### *Переделка из народного рассказа*

### Действие первое

Çĕсен хир. Юман. Ун кутĕнчех пысăк чул выртать. Вăрçă кĕрлесе иртсе каять. Аманнă чăваш. Икĕ юлташ. Укçа енчĕкĕ. Шуйттан: «Ил, ил укçине». «Сывă пул», — аманнине вĕлерет. Савăнăç юрри.

---

* «Тăхăрьял» кĕнекене 1903 çулта çырнă. Вăл пичетленмен, халĕ Шупашкарти ăслăлăх библиотекинче усранать.

Ăн килсе кĕрет. Сăмсине çапса çĕмĕрет. Ăссăр юрă. «Ӳкĕн!» — тенĕ сасă. Ăнсăр пулать. Çил тухать. Аçа çапать. Шуйттанпа пирĕшти.

Чаршав

Действие второе

Пирĕштисем шăтăк тавра. Усал çынна ылханаççĕ. Вăрçăра вилнисене пиллесе юрлаççĕ. Унтан вĕсен чунĕсене илеççĕ те каяççĕ. Пĕччен çын. Шуйттан юрри, ахăлтатни. Ăсатмалли юрă. Тăпра яра пуçлаççĕ. Аçа çапать, шуйттан ахăлтатать. Çынсем тарса пĕтеççĕ. Пирĕштисем анса юрласа шăтăка тултарма тытăнаççĕ.

Чаршав

Действие третье

Килте. Пĕр* çул иртсен.

Пӳртре. Амăшĕпе ачи. Амăшĕн хуйхăллă юрри. Ашшĕн хуйхăллă ...** килсе кĕрет. Пурте хăраççĕ. Шуйттан! Шуйттан! Мăйракаллă! Мăйракаллă! Амăшне те, ачине те вĕлерет. Çӳлте аслати кĕрлет. Пирĕшти чӳрече витĕр: «Мĕскĕн этем». Пирĕшти юрри. Ку кĕтесре хĕсĕнсе ларнă. Пирĕшти. Тепĕр ачи килсе кĕрет. Шуйттан! Кăна та вĕлерет. Аçа çапать. Чӳречерен шуйттан кулса ярать те кунăн чунне илсе каять.

Чаршав

Малтанах:

Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ, —

тесе çырни эпиграф вырăнне пулмалла пулнă. Вăл эпиграфа Иванов хăй çырнă-и, ăçтан та пулсан урăх çĕртен илнĕ-и — халĕ кăтартса пама çук. Трагедие 1907 çулта çырма пуçланă пулас, мĕншĕн тесен ал çырăвĕнчи юлашки «Выçă аптранăскерсем» ятлă сăвă хыçне «1907 çул, декабрĕн 30-мĕшĕ» тесе çырнă.

План хыççăн трагедин çырнă татăкĕсем каяççĕ. Чи малтанах 6-мĕш пайĕнчен пуçланать. Ку ал çырăвĕсĕр пуçне авторăн ытти ал çырăвĕсем пулнă пулмалла, мĕншĕн тесен малтанхи пайĕсене çырмасăрах пуçлама пултарайман пуль. Тепĕр енчен пăхсан, ку шухăш, тен, тĕрĕсех те мар-тăр. Н.Шупуççынни поэт каланă тăрăх, «Нарспи» поэмăна та çырма вăта çĕртен, «Туй» ятлă пайĕнчен, пуçланă тет.

Пирĕн алăри ал çырăвĕ иккĕмĕш хут çырни пулас, малтан çырни (черновик) пулнă пуль, çырнă чухне хăш-пĕр вырăнсенче кăна хуратнă.

* Малтан «Вунă çул иртсен» тесе çырнă та хуратнă.
** Сăмахне уйăрма çук.

Улттăмĕш пайра вăрçă хирĕнче аманнă шăлнĕне вĕлернĕ пиччĕшĕ, укçа илнĕскер, килне таврăнать. Çавăнтах тата тепĕр вариант пур, унтан шăлнĕне вĕлернине кăтартнă. Ал çырăвĕнче каллех çиччĕмĕшпе саккăрмĕш пайĕсем çук. Малалла автор çырнă пекех йĕркерен пичетлĕпĕр.

Мана мĕн пит кирлĕччĕ?
Укçа, укçа — акă вăл!
Укçа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?
Ылтăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл!
Кайăп киле ыранах,
Çитĕп киле каçченех,
Ылтăн-кĕмĕл çурт лартăп,
Выльăх тытăп пинĕпе.
Ирттерĕп çав пурнăçа
Савăнса çеç, кулса çеç.
Текех канăççăр çынсем*
Вăрçăсенче çӳреччĕр.
Мана тата мĕн çитмен?
Манăн акă пурте пур.
Ылтăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл.
Укçа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?

ВАРИАНТ

Мĕншĕн кунта кăлăх
Манăн пуçа çухатас?
Этем çапла шухăшлать**
Хăй ăшĕнче савăнса,
Çӳлтен, çӳлтен çавăнтах
Темле сасă илтĕнет:
— Мĕскĕн этем, мĕн турăн?
Куçна уçса пăх, мĕскĕн,
Ухмах ĕçӳ çинелле***.

Чул çумĕнче пĕр этем
Пуçне çĕклет йынăшса.

---

* «Канăççăр çынсем» тенĕ вырăнне «тĕрлĕ ухмахсем» тесе çырнă та хуратнă.

** Малтан «шухăшлать» тенĕ сăмах вырăнне «такмаклать» тесе çырнă пулнă, кайран хуратнă.

*** Çӳлтен илтĕнекен сасăсем — пирĕшти сассисем. Пирĕшти ӳкĕте кĕме ыйтать, шуйттан хĕтĕртнипе шăлнĕне вĕлерсе айăпа кĕнĕ çынна ӳкĕнме хушать (*У.Я.*).

— Апла пулсан кай кунтан,
Эпӗ сана тăван мар!
Тăшман çынна нихçан та
Памăп турă панине.
— Вӗлеретӗп! Парсан пар!
— Вӗлер чуну çитейсен.
Ватă юман хыçӗнчен
Шуйттан татах хӗтӗртет:
— Ил укçине, ил туртса.
Ылтăн-кӗмӗл çап-çутă
Хутаç тулли ялтăрать.
Ил укçине — вăл санăн!
Ухмах çыннăн куçӗсем
Йăлтăр-йăлтăр çунаççӗ.
Хутаç çине пăхнă та
Хутаç патне туртăнать.
Анчах шăлнӗ укçине
Хăйӗн айне хурса ларнă,
Ик аллинче ик çӗçӗ
Йăлтăртатса тăраççӗ.
— Вилсен вилӗп, чӗрӗлле
Памăп турă парнине.
Ватă юман хыçӗнчен
Шуйттан татах хӗтӗртет:
— Ил, ил, ухмах, мӗн тата
Каллӗ-маллӗ пусатăн?
Акă тăр-тăр чӗтресе
Сăнă çӳле çӗкленчӗ,
Анчах чунӗ çитмесӗр
Татах аяла анчӗ.

Ватă юман хыçӗнчен
Шуйттан... хӗтӗртрӗ,
Сăнă татах çӳлелле
Яр улăхса кайрӗ те,
Пиччӗш хăйӗн шăлнӗне
Чиксе хучӗ укçашăн.
Çӳлтен кӗр-кӗр аслати
Кӗрлет, вӗркет хаяррăн.
Хура пӗлӗт — куç харши
Тата хытă пӗрӗннӗ.
Ухмах этем шăлнӗне
Сăнăпала чиксенех
Илчӗ укçа хутаçне*,
Ташша ячӗ савăнса.

* Скобка ăшӗнче «укçа патне сикрӗ те» тесе çырнă.

Шуйттан юман хыҫӗнчен
Сиксе тухрӗ ахӑрса,
Тем хыҫҫӑн шуйттан та
Ташша ячӗ савӑнса.
Ухмах ҫынна курӑнми
Е ыталать аллипе,
Е чуптӑвать тутипе,
«Шуйттан чури» теейсе
Этем укҫа хутаҫне
Хӑрах алӑпа йӑтнӑ.
Тепӗр аллинчи хӗҫпе
Шаккать укҫа хутаҫне,
Хутаҫ ӑшӗнчи укҫи
Шӑнкӑртатать илӗртсе,
Ылтӑн-кӗмӗл кӗввипе
Ҫын такмаклать ташласа.

Тӑпра ҫине ҫавӑнтах
Кайрӗ этем йӑванса,
Ӑнӗ тухса кайнипе
Ури анчӗ хуҫӑлса.
Сасартӑках ҫил тухать,
Тухса кӗрлесе каять,
Пӗтӗм ҫӗре кисретсе
Аҫа шартлатса ярать.

Шуйттан юман хыҫӗнче
Ахӑлтатать хӑрушшӑн,
Ӑнсӑр этем патнелле
Аллисене вӑл тӑсать.
Ватӑ юман хыҫӗнчех
Ахӑлтатни илтӗнет,
Шуйттан ҫӑварне карса
Ахӑлтатать савӑнса.
Ӑнсӑр этем вилнӗ пек
Кӑвакарса кайнӑ хӑй,
Шуйттан ӑна пӑхать те
Ахӑлтатать хӑрушшӑн
Тӗнче тӗпне хускатса,
Ҫут тӗнчене ишес пек,
Аслӑ тӑват кӗтеслӗ
Ҫут ҫанталӑка илес пек.

---

Чул ҫумӗнче пӗр этем
Ларать хытӑ йынӑшса.

Тӗттӗмленчӗ, каҫ пулчӗ,
Ҫил-тӑвӑл та лӑпланчӗ.

Пĕчĕк ушкăн çар килет
Вилнисене пуçтарма.
Вилнисене пуçтарчĕç,
Шăтăк чавма тытăнчĕç.
Сăнăсемпе, хĕçсемпе
Аслă шăтăк тăваççĕ.
Улăп юман айĕнче,
Аслă чулăн çумĕнче,
Вилнисене юрăпа
Шăтăк ăшне антарчĕç.
Ĕречĕпе вырттарса
Виççĕ ӳксе пуççапрĕç,
Ури çине тăчĕç те
Виçĕ хутчен пуç тайрĕç,
Тăпра ыран ярăпăр,
Чӳкне ыран чӳклĕпĕр
Тесен вĕсем уттарчĕç,
Тĕттĕм çĕрте çухалчĕç.

«Шуйттан чури» ал çырăвĕ çакăнта пĕтет. Вулакан маларах пичетленĕ плана пăхсан уççăн курать ĕнтĕ: пĕрремĕш действи тата малалла тăсăлмалла пулнă. Вăрçă хирĕнче шуйттанпа пирĕшти тĕл пулни тата пирĕшти çынна ӳкĕнме хушни çинчен çырнисем питĕрех те вăйлă вырăнсем трагедин çырнă пайĕсенче пулманни трагедин тĕп шăнăрне татса хăварни малтанхи действинчи ĕçсем чи çӳллĕ пăнчăра епле пуласси çинчен калама çук. Эпĕр çакна çех калама пултаратпăр: трагедин пĕрремĕш действийĕ кăна 10 пайран иртнĕ е 20 пая та çитĕччĕ. Пĕтĕмпе трагедире 3 действи. Çапла ĕнтĕ авалхи литература ӳкерчĕкĕпе халăх калавĕнчи тĕшмĕшлĕх тăрăх пуçланă трагеди питĕ пысăка каймалла пулнă, урăхла каласан, вăл мистери евĕр пулĕччĕ*.

## II. ЮМАХСЕМПЕ ХАЛАПСЕМ

Пирĕн алăри пĕчĕк тетрадь тĕлĕнтерет. Вăл, «Шуйттан чури» трагедипе пуçланнăскер, малалла тата ытти япаласем çине куçать: унта кĕске пĕчĕк сăвăсем, унтах чăваш

* К.В.Иванов вырăссен М.Ю.Лермонтов поэтăн Байронла вăйлă çынсене тăвăллă кăмăла пуç тайнă мистикле философине ырланă. Çавăнпа кунта К.В.Иванов Байрон произведенийĕсене юратнă ĕнтĕ. «Шуйттан чури» трагедие çырнă чухне Байронăн «Каин», «Пĕлĕтпе çĕр», «Манфред» мистерийĕсен сывлăшĕ те 17 çулхи Иванова хавхалантарма пултарнă *(У.Я.)*.

халапĕсене çырма пуçлани, унтах Пăртта йăхĕн историне çырма шухăшлани. Ун чухне вĕт автор 17 çул тултарнă. Вăл хăйĕн çулĕпе ача пулсан та, пултарулăхĕпе темиçе çул хушши ĕçленĕ пысăк поэт пек ĕçленĕ. Унăн çавăн чухнехи пултарулăхĕн сарлака диапазонĕ тĕлĕнмелле: вăл Лермонтовăн săввисене куçарать, романтикла мистери евĕр «Шуйттан чури» çырать, «Нарспи», кусемсĕр пуçне чăваш халапĕсене улăштарса çырать. Çакă статьяна çырнă май Иванов халапĕсемпе юмахĕсем çинчен пĕр-икĕ сăмах каласа хăварас килет.

Вăл халапсем çырнă чухне А.С.Пушкин пек ĕçленĕ. Хăй вăхăтĕнче Пушкин халапĕсем тĕлĕшпе халăх чĕлхине тиркесе мăкăртатакан писательсем «Пушкин хресчен сăхманĕ тăхăнса çӳрет» тесе виртлешнĕ. Пушкин халăх (хресчен) чĕлхинчи ахахсене, лайăх сăмахсене суйлама пĕлнĕ, вăл халăх халапĕсемпе юмахĕсене те хăйĕн пек улăштарса çырнă. К.В.Иванов та çаплах, чăваш халапĕсемпе юмахĕсене ахаль çех çырса илмен, хăйĕн пултарулăхĕн али витĕр кăларнă, урăхла каласан, вăл халапсен темисене хăйне пăхăнтарнă, вĕсене хăй пек урăхлатса илемлетнĕ. Халапсене çырасси Ивановшăн «Нарспие» çырнă чухнехи пекех пысăк пултарулăхлă ĕç пулнă. Ку тĕлĕшпе вăл Пушкинран вĕренни çакăнтан та курăнса тăрать: Пушкин хăйĕн «Сказка о царе Салтане» тата «Сказка о мертвой царевне и о семи богатырях» халапĕсен вĕçĕнче çапла çырать:

Я там был, мед, пиво пил
И усы лишь обмочил.

К.В.Иванов та «Тăлăх арăм» халапне Пушкин пекех пĕтерет:

Эп те вара хурланса,
Икĕ чуна асăнса
Урхамаха вырттартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

Пирĕн алăри тетрадь К.В.Иванов 1907 çулта чăваш халапĕсемпе юмахĕсен циклне çырма хатĕрленнине кăтартать.

Вăл халапсемпе юмахсен планне çапла çырнă:

1. Тимĕр тылă. 2. Тăлăх арăм. 3. Ватă вăрман. 4. Хур кайăксем*. 5. Икĕ хĕр.

---

* «Хур кайăксем» тенине хуратнă.

Ку планра кӑтартнисенчен виççӗшне — «Тӑлӑх арӑм», «Тимӗр тылӑ», «Икӗ хӗр» произведенисене çырнӑ, ыттисене çырман. Тетрадьре халапсемпе юмахсен циклне пуçласа янӑ сӑвви пур.

Акӑ вӑл:

Кукашшӗне итлесе
Ларать ача сак çинче.
Хӑйӑ çунать ташласа
Хура пӳрте çутатса.

Ватти тӑвать çӑпата
Хӑй юмахне çаптарса.
(Юмах юпа тӑрринче,
Халап хапха тӑрринче.)

Ку сӑвӑ хыççӑн планра кӑтартнӑ халапсемпе юмахсем каймалла пулнӑ.

Ал çырӑвӗнче «Ватӑ вӑрман шухӑшӗ»* ятлӑ халапӑн пуçламӑшӗ пур.

### ВАТӐ ВӐРМАН ШУХӐШӖ

Асап килсен, хӗн килсен
Шухӑшласа ларатӑп:
Çамрӑк вӑхӑт, ыр вӑхӑт,
Ăçта эсӗ çухалтӑн?

Çамрӑк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрӗç тӗлӗк пек.
Асап, хӗн-хур халӗ пур,
Килчӗç хура пӗлӗт пек.

Аяла «Отрывок из легенды про чувашского царя» тесе çырнӑ, халапра мӗнле сюжет пуласси паллӑ мар.

Ку япалана çырнӑ-и, çырман-и — ку ыйту пирки халӗ татӑклӑн калама çук, мӗншӗн тесен К.В.Ивановӑн пӗтӗм материалӗсене пухман-ха. Унпа пӗрле пурӑннӑ юлташӗсем те Иванов епле ӗçлени çинчен сахал пӗлеççӗ. Иванов хӑйӗн кӑмӑлӗ-психологийӗпе питӗ хӑюсӑр пулнине кура çырасси-тӑвасси çинчен питех ваклашса калаçма юратман, çынсенчен ютшӑнарах пурӑннӑ**.

---

* Планра «Ватӑ вӑрман» ятлӑ пулнӑ.

** Хусанкай «Поэтпа миссионер» поэминче К.В.Иванов сӑнне тӗрӗс парайман. Унта К.В. темле çӑмӑлттай кӑмӑллӑ этем пулса тухнӑ (*У.Я.*).

## III. СĂВĂСЕМ

Кунта пичетленекен сăвăсене пĕтĕмпех якатса çитерменни курăнать, вĕсене чи малтанах çырнипе хăварнă, ĕçлесе пĕтермен. Вырăс поэчĕсен сăввисем евĕрлĕ сыпăксем те палăраççĕ вĕсенче.

* * *

Çывăр, ачам, çывăрах!
Ыйху тутлă пултăрах!
Сана пăхма илтĕм эп
Ăмăрт кайăк, çил, хĕвел.
Ăмăрт вĕçрĕ килелле,
Хĕвел анчĕ ту айне,
Виçĕ каçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.
Çиле ыйтать амăшĕ:
— Ăста эсĕ пултăн-ши?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и
Е хумсене çапрăн-и?
— Тинĕс хумне çапмарăм,
Çăлтăрсене тивмерĕм,
Эпĕ ача сыхларăм,
Ун сăпкине сиктертĕм.

## УСАЛ ШĂРĂХ

Пĕр пĕлĕт çук, хĕвел çунать,
Кăвак пĕлĕт йăлтăрать,
Пăчă сывлăш вĕри тăрать,
Мĕскĕн чечек сарăхать.

Ыраш ани типсе кайнă,
Пучахĕ унăн сарăлнă.
Пирĕн çырман шывĕ чакнă,
Пирĕн арман лăпланнă.

## КĔРКУННЕ

Шăнтать ĕнтĕ кунсерен,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
Вĕçен кайăк сассинчен
Хуйхă кĕрет чĕрене.
Карти-карти кайăксем
Вĕçеç тинĕс леш енне.

Тăхăннă* йывăçсем
Пурте сарă** тумтирне.
Хĕвел кулать сайрарах,
Шăрши пĕтнĕ чечексен,
Йĕрсе ярĕ ак часах
Кĕркунне те вăрансан***.

Малалла «Выçă аптăранăскерсем»**** ятлă сăвă каять, ăна пĕтĕмпех якатса çитернĕ сăвă теме те пулать.

Чи юлашки питĕнче кĕркунне çинчен çырнă сăвă татăкĕ пур:

Килсе çитрĕ кĕркунне...
Йывăç пахчи çаралать.
Типсе кайнă çулçисене
Çил вĕçтерсе вылятать.

Малтанах палăртса хăвартăмăр: ку сăвăсене якатса çырнă сăвăсен шутне кĕртсех çитерме юрамасть. Поэт вĕсене малтанхи варианчĕпех хăварнă.

Çав ал çыру çинчех çăкăр, пулă тата ытти япаласен хакĕсене çырнă. К.В.Иванов ун чухне 9 тенкĕ шалу илсе тăнă иккен, чухăн пурăннă.

К.В.Иванов вилнĕренпе 20 çул тулнă тĕлне çак материала пичетлесе кăларатпăр, малашне тата çĕнĕ ал çырăвĕсене тупасса шансах тăратпăр. Вĕсене пичетлесе пынă май тĕплĕн хак парса пырăпăр.

P.S. Кемеровăри чăваш техникумĕнче вĕрентекен П.А.Туринге юлташа çакăнта пичетленекен материалсене панăшăн тав тăватпăр. К.В.Ивановпа вĕреннĕ тата юлташлă пурăннă çынсен аллисенче унăн çырăвĕсем пулма кирлĕ. Çав юлташсем хăйсен аллинчи хучĕсене чăваш литератури организацине парсан пит те лайăхчĕ (*У.Я.*).

Трактор. 1935. 11 №.

* «Тăхăннă» вырăнне темле уйăрма çук сăмах çырнă.
** «Пурте сарă» вырăнне скобка ăшĕнче «тĕрлĕ тĕслĕ» тесе çырнă.
*** Ку сăвва çырма кăна пуçланă та вĕçне çитермен.
**** Ăна альманахăн 10-мĕш номерĕнче пичетленĕ.